28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 ОКТЯБРЬ 20 ШАМАТКУН 204 (6955) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховнăй Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Чугун çулсене хĕлле йĕркеллĕ ĕçлеме хатĕрлер!

Чугун çул транспорчĕ пирĕн халăх хуçалăхĕнче питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл халăх хуçалăхне мĕн кирлине турттарса парать, промышленноçпа ялхуçалăхне малалла аталанма пулăшать.

Отечественнăй вăрçă çулĕсенче пирĕн чугун çулсем çав тери хăвăрт та чăтăмлăн ĕçлерĕç, паттăр Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине вăхăтра тата çителĕклĕ таран турттарса парса тăчĕç.

Халĕ вăрçă вăхăчĕ иртрĕ. Тăван çĕршыв мирлĕ аталану тапхăрне кĕчĕ. Сак мирлĕ пурнăç тапхăрĕнче чугун çул транспорчĕн пĕлтерĕшĕ татах та пысăкланмалла, ун умĕнче çĕнĕ те пысăк ĕçсем тăраççĕ.

Тăваттăмĕш пилĕкçуллăхра пирĕн чугун çул транспортне, вăрçă вăхăтĕнче вырăнăн-вырăнăн аркатнăскерне, юсаса ура çине тăратмалла, çĕнĕрен те чылай тумалла. Çавăнпа та чугун çулсен тăршшĕне вăрçăччени виçене çитерессн, вĕсем таварсем турттарассине ӳстересси, вĕсен ĕçне тата ытти енĕпе те лайăхлатасси—çĕнĕ пилĕкçуллăхри пĕрремĕш задача пулса тăрать. Сак задачăна ăнăçлă пурнăçа кĕртесси, чи малтанах железнодорожниксем хăйсем мĕнле ĕçленинчен, чугун çул транспортне халăх хуçалăхĕ мĕнле пулăшса тăнинчен тата партин вырăнти организацийĕсем чугун çул ĕçĕшĕн мĕнле тăрăшнинчен килет. Сак задачăна татса парасси чугун çул транспортне хĕле кĕме мĕнле хатĕрленинчен те килет.

Чугун çулсем халĕ хĕлĕн расна та йывăр условийĕсене кĕреççĕ. Хĕллехи сивĕсемпе юр хывса лартнисем транспорт ĕçне, паллах, йывăрлатаççĕ. Анчах та чугун çул хуçалăхне хĕле малтанах тĕплĕн хатĕрлесе кĕртсен, çав сивĕсем хăрушă мар, ĕçре пулакан йывăрлăхсене çăмăллăн сирме пулать.

Хĕле тĕплĕн хатĕрлесе кĕресси—чугун çул транспортĕнче вăхăтра тумалли ĕç пулса тăрать. Çакна асра тытнă коллективсем хăйсен хуçалăхне хĕле кĕме тĕплĕн хатĕрлесе çитерне. Тĕслĕхрен, Вăрнар станцине (начальникĕ Пырков юлташ) илер. Кунта хĕле хатĕрленес ĕçе çуллахи уйăхсенчех туса пынă, август уйăхĕнче вара хĕле пĕтĕмпех хатĕрленсе çитнĕ. Вокзал çуртне шалтан та, тултан та юсаса тухнă, шуратса илемлетнĕ, кантăксем лартнă. Пассажирсем кĕтсе лармалли зала, буфета, кухньăна, дежурнăй пӳлĕмне, стрелочнăй постсене те кирлĕ пек туса çитернĕ. Кусемсĕр пуçне станцири çулсене юсас тата тасатса тухас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тунă. 36 пин тăваткал метр çул çинчен 90 кубометр шлак тасатнă, 76 шпал улăштарнă, станци перронĕ çине шлак сапса тикĕслетнĕ, хĕлле хутма вутă хатĕрленĕ. Кунта стрелкăпа сигнал хуçалăхне те тӳрлетсе çитернĕ. Сак ĕçсене станци коллективĕ хăйĕн вăйĕпех, государствăн укçине тăкаклăмасăр тунă.

Савăн пекех хĕле кĕме Улатăрти паровоз деповĕ, Канашри сыхăнупа сигнализаци дистанцийĕ, тĕпрен илсен, хатĕрленсе çитнĕ. 17-мĕш дистанцин коллективĕ те хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе тумалли ĕçсене пурне те тунă. Ку дистанцире октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлнех çулсене юсаса тухнă, юр тасатмалли машинăсене, юр тытмалли щитсене хатĕрлесе хунă т. ыт. те.

Анчах та пирĕн республикăри чугун çул хуçалăхне хĕл вăхăтĕнче те йĕркеллĕ ĕçлеме хатĕрлес тĕлĕшпе пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Çав çитменлĕхсем железнодорожниксен нумаях та пулмасть Канашра пулса иртнĕ канашлăвĕнче уççăн палăрчĕç. Чылай работниксем канашлура тухса каласçинчен уйрăм станцисемпе резъездсенче, депосемпе мастерскойсенче хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе туса çитермен ĕçсем нумайăн курăнчĕ.

Хĕлĕн йывăр условийĕсенче ĕçлеме Шупашкар станцийĕ уйрăмах начар хатĕрленнĕ. Станци территорийĕ шлаксемпе, тимĕр-тăмăрсемпе тата ытти кирлĕ марсемпе тулса ларнă. Вĕсене тасатма шутламаççĕ. Вокзалра ним йĕрки те çук, кунта тасалăхпа тирпейлĕх тума тăрăшмаççĕ, алăксене ăшă тытмалла туман, кантăксене çыпăçтарман. Вокзалпа служба пӳлĕмĕсене ăшăтма 300 кубометр вутă кирлĕ. Хальхи вăхăтра 65 кубометр кăна пур, урăх хатĕрлемен. Кунта ытти çитменлĕхсем те пур. Анчах Шупашкар станцийĕн начальникĕ Шувалов юлташ çав çитменлĕхсене сирме васкамасть, хăйĕн хуçалăхне хĕле хатĕрлес ĕçре пуçарулăх палăртмасть.

Канаш станцийĕ—пирĕн республикăра кăна мар, Хусан чугун çулĕ çинче те пысăк станци шутланать. Çавăнпа кунта хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе нумай ĕçсем тумалла. Канаш станцийĕнче те туса çитермен ĕçсем пур-ха. 1-мĕшпе II-мĕш Канашри технически çуртсене юсаса çитермен, 1-мĕш Канашри дежурнăй пӳлĕмне юсама та тытăнман. Стрелка пӳлĕмĕсем те хĕле хатĕр мар, вĕсене ăшă тытмалла туман. Станци валли вутă хатĕрлемен.

Станци çулĕсене юсаса тӳрлетес енĕпе те çитменлĕхсем чылай. II-мĕш Канашри пĕрремĕш çул çинче пысăк рельссем пур пирки вăл çул усă курма юрăхлă мар. Юр хывнине хирĕç кĕрешме кирлĕ инвентарьсене тупса çитермен. Кадрсем çитменни те кунта хĕл вăхăтĕнче ĕçре чăрмав кӳме пултарать.

Хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе туса çитермен ĕçсем Çĕмĕрле станцийĕнче те пур. Станци чӳречисен шалти хучĕсене лартман, кантăкĕсем ванчăк. Стрелка будкисем çĕмрĕк. Станцири рабочисем валли хĕл тумтирĕсем тупса хуман. Çĕмĕрле станцийĕ вăрманта ларать пулин те, унти работниксем станци валли вутă хатĕрлемен.

Чугун çул транспортне хĕле лайăх хатĕрлесси—пысăк та йывăр ĕç. Сак ĕçре железнодорожниксене пирĕн промышленность предприятийĕсемпе колхозсем енчен пулăшу пани те кирлĕ. Горькири малта пыракан предприятисен коллективĕсем чугун çулсене хĕле хатĕрлеме пулăшас тĕлĕшпе социализмлă ăмăрту пуçарса ячĕç. Сак ăмăртăва пирĕн республикăри предприятисем те хутшăнчĕç. Улатăрпа Çĕмĕрлери предприятисем унти паровоз хуçалăхĕсемпе станцисене шефа илнĕ, материалсемпе ĕç вăйĕ парса пулăшаççĕ.

Чугун çулсене хĕле хатĕрлес ĕçе Чурачăк, Çĕрпӳ, Çĕмĕрле тата Вăрнар районĕсенчи колхозсем те хутшăнаççĕ. Вĕсем, час-часах воскресниксем ирттерсе, вутă турттарса параççĕ, линисене юсаса тӳрлетеççĕ.

Анчах та чугун çул транспортне хĕле хатĕрленме колхозсем енчен пулăшассине малашне татах та вăйлатас пулать. ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсен хăйсен территорийĕсене кĕрекен чугун çул хуçалăхне хĕле мĕнле хатĕрленнине тĕплĕн пĕлсе тăмалла. Пĕлни кăна сахал: сак ĕçри çитменлĕхсене курса, вĕсене сийĕнчех сирмелле, хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе тумасăр юлнă ĕçсене халех туса çитермелле.

Парти организацийĕсем пулăшса тăнипе пирĕн железнодорожниксем Отечественнăй вăрçă çулĕсенче мухтава тивĕçлĕ ĕçлерĕç. Вăрçă вăхăтĕнчи ĕçĕн пуян опычĕпе усă курса, чугун çул работникĕсем сак хĕлре йĕркеллĕ ĕçлеме мĕн кирлине пурне те тăвĕç.

СССР Верховный Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп суйлав комиссийĕн членĕсем пулма кандидатсем тăратни

Магнитогорскри доменщик А. Л. Шатилин—Тĕп суйлав комиссийĕн членĕ пулмалли кандидат

МАГНИТОГОРСК, октябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 16-мĕшĕнче Магнитогорскри металлурги комбиначĕн пур пехĕсенче те рабочисен пухăвĕсем пулса иртнĕ. Пухусенче металлургсем суйлав кампанине хутшăнса ĕçлес ыйтăва сӳтсе-явнă.

Доменщиксен коллективĕн пухăвĕнче Тĕп суйлав комиссийĕн членĕ пулмашкăн комбинатри чаплă доменщика Алексей Леонтьевич Шатилин юлташа кандидата тăратма сĕннĕ.

Пухура горновой Андросов юлташ сăмах тухса каланă. Вăл Алексей Леонтьевич Шатилин çинчен çапла каласа кăтартнă: Шатилин юлташ большевиксен партийĕн шанчăклă ывăлĕ, малта пыракан производственник, горновой пулса ĕçлесе чи лайăх мастера тухнă. Отечественнăй Аслă вăрçă вăхăтĕнче паттăррăн ĕçленĕшĕн, Оборонăн государственнăй комитечĕ панă заданисене питĕ лайăх пурнăçа кĕртсе пынăшăн Шатилин юлташа икĕ хутчен Ленин орденĕпе наградăланă.

Шатилин юлташăн кандидатурине Магнитогорскри комбинатăн ытти пехĕсенче те тĕплĕн сӳтсе-явнă. Пралукпа штрипс пехĕнчи электриксен бригадирĕ Гольдин юлташ Шатилин юлташа ырласа çапла каланă: Шатилин юлташа эпĕ комсомолецсен домнинче чи ăста мастер пулса ĕçленине пĕлетĕп, вăл Тăван çĕршыв патриочĕ. Алексей Леонтьевич доменщиксен çамрăк ăрăвне пăхса ӳстерессишĕн питĕ нумай тăрăшрĕ. Эпĕ хамăр пехри пур рабочисене те Шатилин юлташ кандидатуришĕн сасăлама чĕнетĕп.

А. Л. Шатилин юлташăн кандидатурине Магнитогорск комбинатĕнчи пур пехсен коллективĕсем те пĕр кăмăллă пулса сĕннĕ.

Магнитогорепсем ку кунсенче çав тери хавас ĕçлеççĕ.

Магнитогорск комбиначĕн пур пехĕсенче те кунран кунах Октябрьти социализмлă аслă революци 28 çул тултарнă ятпа пыракан ăмăрту саралнăçемĕн саралса пырать.

Ферапонт Петрович Головатый—Тĕп суйлав комиссийĕн членĕ пулма тăратнă кандидат

САРАТОВ, октябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 17-мĕшĕнче Саратов облаçĕнчи Çĕнĕ Покровски районри «Стахановец» ятлă колхозра колхозниксен пухăвĕ пулса иртнĕ. Илемлĕтнĕ шкула Степаново ялĕнчи çынсем, Табуновски ял Советĕнчи хресченсем, районри обществăллă организаписен представителĕсем пухăннă.

СССР Верховный Советне суйласси çинчен тата суйлав комиссийĕсене колхозниксем хутшăнасси çинчен Çĕнĕ Покровски Райсовет Исполкомĕн председателĕ Кузнецов юлташ доклад туса панă.

Пухура чи малтанхи сăмаха уйхир бригадин бригадирне Отечественнăй вăрçăра пулнă А. У. Корниенко юлташа панă. Вăл СССР Верховный Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп суйлав комиссийĕн членĕ пулмашкăн Ферапонт Петрович Головатыя кандидата тăратма сĕннĕ. Головатый юлташ—хамăр паттăр Хĕрлĕ Çара пулăшас тĕлĕшпе пĕтĕм халăх хушшинчи юхăма пуçласа янă çын.

Корниенко юлташ Конституцин аслă пултаруçине, пирĕн çĕнтерӳсен генилле организаторне И. В. Сталин юлташа хисеплесе нумай çул хушши пурăнма ырă суннă. Корниенко юлташăн сăмахне пухури халăх тăвăллăн алă çупса кĕтсе илнĕ.

Пухура çавăн пекех тата трактор бригадин бригадирĕ Ф. Н. Махиня юлташ, колхоз бригадирĕ Карпов юлташ, колхозник Безин юлташ, партин Çĕнĕ Покровски райкомĕн секретарĕ Бумажкин юлташ сăмахсем тухса каланă.

Колхозниксем, пурте пĕр кăмăллă пулса, çакăн пек резолюци йышăннă: СССР Верховный Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп суйлав комиссийĕн членĕ пулмашкăн Ферапонт Петрович Головатый юлташа кандидата тăратас. Головатый юлташ Саратов облаçĕнчи Çĕнĕ Покровски районри Табуновски ял Советĕнчи «Стахановец» колхоз председателĕн заместителĕ пулса ĕçлет.

Унтан Головатый юлташ сăмах тухса каланă. Вăл колхозниксене хăйне шанса чыс тунăшăн чĕререн тав тунă. Ленинпа Сталинăн аслă ĕçĕсене яланах чыслăн пурнăçа кĕртсе пыма сăмах панă.

Ӳкерчĕк çинче: пирĕн земляк полковник **И. В. Васильев.** Вăл Советски районри Уйкас Торайра çуралса ӳснĕ.

Пир-авăр ытларах туса кăларма тытăннă

Пир-авăр промышленноçĕ III-мĕш кварталта, II-мĕш кварталта туса кăларнă продукци хисепĕпе танлаштарсан, çĕрмамăкĕнчен тăвакан пир-авăр 3.100.000 метр, пусма таварсем 400.000 метр, пурçăнпа çурмапурçăн пир-авăрсем 1.200.000 метр ытларах туса кăларнă. Çип таврашне 9.000.000 тупланка ытларах туса кăларнă.

IV-мĕш кварталта татах та ытларах пир-авăр, одеялсем, алшăллисем, тутăрсем тата ытти тĕрлĕ таварсем те туса кăларма палăртнă. (ТАСС).

ОСИПЕНКО ПОРЧĔ ĔÇЛЕМЕ ТЫТĂННĂ

Запорожье облаçĕнчи Осипенко порчĕ ĕçлеме тытăннă. Вăл Азов тинĕсĕнчи пысăк суту-илӳ порчĕсенчен пĕри пулса тăрать. Рабочисем хăйсен вăйĕпех причалсене, чугун çулсене, складсене тата ытти çуртйĕрсене юсанă. Халĕ порта пынă карапсем çинчен таварсем пушатаççĕ. (ТАСС).

«МУРМАНСК» ПАРОХОДА ЮСАСА ПĔТЕРНĔ

Мурманскри карапсем юсакан заводра океанра çӳрекен «Мурманск» ятлă пысăк парохода юсаса пĕтернĕ. Ку пароход халĕ Арктикăна тухса кайнă. Арктикăра хĕл каçакансене кирлĕ япаласем леçсе панă хыççăн «Мурманск» порта каялла таврăнать. (ТАСС).

КИЕВ МУЗЕЙĔН АРХИВНЕ ТУПНĂ

Кенигсбергра пĕр çуртăн ишĕлчĕкĕ айĕнче Н-ски чаçĕн гвардеецĕсем Киеври государство музейĕн архивне тупнă. Çав архива гитлеровецсем Украинăна оккупациленĕ вăхăтра Германие илсе кайнă пулнă.

Фашистсем пăха документсене нӳрлĕ подвала пăрахнă. Нумай фотоӳкерчĕксем, ӳкерчĕксем тата алçырăвĕсем пăнтăхса кайса пăсăлса пĕтнĕ. Çав çуртăн ишĕлчĕкĕ айĕнче Иван Франкăпа Иван Котляревскин алçырăвĕсене тупнă. Унтах Тарас Шевченкăн «Катерина» ятлă ӳкерчĕкне тата икĕ автопортретне тупнă. (ТАСС).

АГИТАТОРСЕМ „ПОЛОЖЕНИЕ" ĂНЛАНТАРСА ПАРАС ĔÇРЕ

ПЕРВОМАЙСКОЕ, октябрĕн 19-мĕшĕ. (Телефонпа). «СССР Верховный Советне суйламалли Положение» районри ĕçсыннисене ăнлантарса парас ыйтупа нумаях пулмасть партипе совет активĕн канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура пурĕ 29 çын пулчĕ. Канашлу хыççăн партипе совет активĕнчен 19 çын ялсене тухса кайрĕ. Халĕ кашни ял Советĕнчех ĕçсыннисене «Положение» вĕрентес ĕçе организациленĕ. Ку ĕçе «Положение» малтан агитаторсене хăйсене ăнлантарса парассинчен пуçларăмăр. Пур ялсенче те агитаторсене участоксем уйăрса панă. Агитаторсем «Положение» ăнлантарас ĕçе колхозри хуçалăх ĕçĕсемпе çыхăнтарса туса пыраççĕ.

Агитаторсене пулăшас шутпа октябрĕн 20-мĕшĕнче район пентрĕнче пуçламĕш парторганизапи секретарĕсемпе агитколлектив руководителĕсен семинарĕ пулать, çывăхри кунсенче темиçе ял Советĕнчи агитаторсен вырăнти канашлăвĕсем пулса иртмелле.

И. ДОЛГОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

„СССР Верховный Советне суйламалли Положение" вĕренеççĕ

КАЛИНИНО. (Телефонпа). Республикăра тухакан «Чăваш Коммуни» тата «Красная Чувашия» хаçатсенче «СССР Верховный Советне суйламалли Положени» пичетленсе тухсанах, районри ĕçсыннисем ăна пысăк тимлĕхпе вĕренме тытăнчĕç. Агитаторсем ĕçсыннисене «Положение» вуласа ăнлантараççĕ. «Положени» тухнă хаçатсен витринине организацилеççĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмăнах Асăм çырми ял Советĕнчи агитколлектив (руководителĕ партин территориллĕ пуçламĕш организацийĕн секретарĕ Смирнов) лайăх ĕçлет. Агитаторсем колхоз правленийĕсенче, клубсенче, вулав çурчĕсенче тата колхозниксем ĕçленĕ çĕрте «Положение» ăнлантарса параççĕ. Ял Советне кĕрекен «Комбайн», «Коминтерн», тата Мичурин ячĕпе тăракан колхозсенче кашнинчех «Положени» тухнă хаçатсен витринине тунă. Колхозниксене «Положени» çинчен ăнлантарса парас тĕлĕшпе уйрăмăнах вулав çурчĕн заведующийĕ Федорова, учитель Иванипев, парти членĕ Горбунов, Мичурин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Кураков тата Егоров агитаторсем пултаруллăн ĕçлеççĕ. Кунта стена хаçачĕсене те йĕркеллĕ кăларса тăраççĕ.

Ку тĕлĕшпе Юманай, Çавалкасси Мăрат, Услапа Нурăс ял Совечĕсенчи агиткоколлективсем те лайăх ĕçлеççĕ. Асăннă ял Совечĕсенче кашнинчех «Положение» вуласа ăнлантарас ĕçе тимлĕн тытăннă, ятарласа хаçат витринисем йĕркеленĕ.

М. АНДРЕЕВ,
ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕ.

Студентсем суйлав законне вĕренеççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Ялхуçалăх техникумĕнчи парторганизапи студентсем хушшинче «СССР Верховный Советне суйламалли Положение» вĕренес ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Ку ĕçе тума 13 коммуниста çирĕплетнĕ. Вĕсем «Положение» ăнлантарассине Сталин юлташ Советсен Чрезвычайнăй 8-мĕш съездĕнче Конституци проекчĕ çинчен тунă докладпа çыхăнтарса пыраççĕ.

Октябрь уйăхĕ—государствăна тырă, çĕрулми, пахчаçимĕç парса татмалли тата авăн çапса пĕтермелли уйăх

Тырă-тул парса татма пĕтĕм вăя мобилизацилемелле

МУРКАШ. (Телефонпа). Районри колхозсен государствăна тата пĕр пин тоннăна яхăн тырă памалла. Уйрăмăнах «Комбайн», «Зерно», Ульянов ячĕпе тăракан тата ытти хăшпĕр колхозсем начар ĕçлеççĕ. «Зерно» колхоз (председателĕ Порфирьев юлташ) юлашки пилĕк кунлăхра пĕр килограмм та тырă паман, çав вăхăтрах колхозăн государствăна тата 200 пентнера яхăн памалла. «Комбайн» колхоз (председателĕ Сотников) 300 пентнер, «Ударник» колхоз (председателĕ Илларионов) 200 пентнер тырă пама тивĕçлĕ. Çак парăма хăвăртрах татас тесе, асăннă колхозсенче кирлĕ пек ĕçлемеççĕ-ха.

«Комбайн» колхозăн çĕршер пăт тырă итемре сăвăрмасăр выртать. Кутузов ячĕпе тăракан колхоз та государствăна тырă парас енĕпе юлса пырать. Анчах кунта пĕр эрне ытла ĕнтĕ, çанталăк начар тесе, авăн çапмаççĕ. «Самолет» колхозăн государствăна тырă тата 200 пентнер леçмелле. Колхозăн 2 молотилка пур, вĕсемпе туллин усă курмаççĕ. Кунта кĕлтесене те капана хывса пĕтермен, 6 гектар ытла çĕрулми кăлармалла. Колхозра ĕçлеме пултаракан çынсем 56 шутланаççĕ, анчах та ĕçе 20—25 çын кăна тухать. Г. Ярлукова, Е. Трофимова, О. Васильева, М. Шевлева колхозницăсем яланах ĕçрен пăрăнса çӳреççĕ. Вĕсене ответ тыттарас пирки колхоз правленийĕ нимĕн те тумасть.

Халĕ кашни сехет хаклă. Тырпула та та çĕрулмине пĕтĕмпех пухса кĕртес, государствăна тырă тата çĕрулми парса татас ĕçе пĕтĕм вăя мобилизацилемелле.

Ф. МАЛЫШКИН.

Лайăх çанталăка кĕтсе ларакансем

ÇĔРПӲ, октябрĕн 19-мĕшĕ. (Телефонпа). «Верный путь», «Прожектор», «8-ое марта», «Балтиец», «Луч», Калинин ячĕпе тăракан тата Иваново ял Советĕнчи колхозсем çĕрулми кăларса пĕтерсе государствăна та парса татнă.

Сак колхозсемпе пĕр условирех ĕçлекен Кăшаркассинчи «Пионер» колхозра вара çĕрулмине пĕтĕмпе те 10 процента яхăн кăна кăларнă. 3-мĕш бригадăра (бригадирĕ П. Шиверов юлташ) çĕрулми кăларма та тытăнман.

Колхоз çĕрулми кăларас тата кĕлтесене капана хывас тĕлĕшпе юлса пыни пĕтĕмпех колхозри ĕçе кирлĕ пек организацилеменнинчен килет. Кунта ĕçе тухман çынсем вуншарăн шутланаççĕ. Лашасем çитмеççĕ тесе, государствăна çĕрулми парассине тăсса пыраççĕ, çав вăхăтрах колхозри кӳлме юрăхлă 6 вăкăрпа усă курмаççĕ.

Колхозра кăçал комбайнпа тырă вырнă. 30 гектар çинчен вырса пухнă сĕлĕ уламĕ çак вăхăтченех хирте çĕрсе выртать. Колхоз председателĕ Федоров юлташ вăл улама вăхăтра пухас тесе нимĕн те туман.

Хыркассинчи «Кульмет», «Звезда» тата Киров ячĕпе тăракан колхозсем те çĕрулми кăларма тытăнман. Çак колхозсен руководителĕсем те: лайăх кунсем пулĕç-ха, çĕрулмине кăларса илме вăхăт пулĕ,—тесе хăйсене хăйсем лăплантарса пурăнаççĕ.

9 трактор юсанă

ЭЛĔК, октябрĕн 19-мĕшĕ. (Телефонпа). МТС-ри авăн çапас тата ытти ĕçсене хутшăнман трактористсемпе трактористкăсем хăйсен тракторĕсене юсама тытăнчĕç. 5-мĕш трактор бригадинче (бригадирĕ Данилов юлташ) икĕ тракторист хăйсен тракторĕсене юсаса пĕтернĕ. Филиппов ертсе пыракан 6-мĕш трактор бригадинче 2 трактор юсанă. Çак тракторсенчен пĕрне бригадир помощникĕ Васильев юлташ хăй юсанă. 7-мĕш бригадăри Архиповпа Сухарева юлташсем те хăйсен тракторĕсене юсаса пĕтернĕ. 12-мĕш бригадăра 2 трактор, 10-мĕш бригадăра 1 трактор—МТС-ра пурĕ 9 трактор—юсаса пĕтернĕ.

МТС тимĕрçисем халĕ хĕлле тракторсем юсанă вăхăтра кирлĕ пулакан инструментсем хатĕрлеççĕ. 65 çулхи тимĕрçĕ С. Кузнецов юлташ уйрăмăнах лайăх ĕçлет. Вăл хăйĕн кулленхи заданине 200 процентран кая тултармасть Д. Трофимов тимĕрçĕ те кулленхи нормăна 130—150 процент тултарать.

Анчах та, МТС-ĕпе илсен, хĕллехи вăхăтра тракторсем юсама хатĕрленесси çителĕксĕр пырать. Мастерскойра пĕр кăмака тунă, урайне сарнă, çав вăхăтрах кантăксене лартса пĕтермен. МТС-а 400 кубометр вутă кирлĕ пулать, паянхи куна пурĕ те 40 кубометр кăна пур, 5 тонна кăмрăк вырăнне пурĕ те 0.5 тонна кăна хатĕрленĕ. Двигатель те хатĕр мар-ха.

Тракторсем юсама пуçăмалли вăхăт çитрĕ. Çак ответлă тапхăра пур енчен те хатĕр кумалла.

Н. КОНДАКОВ.

Тырра тăккаланăшăн ответ тыттармалла

СОВЕТСКОЕ. (Хамăр корр.). Мăн Пакăш ял Советĕнчи «Звезда» колхозра тырра кĕлете хывиччен пит те нумай тăккаласа сая яраççĕ. Кĕлте кĕртнĕ чух та, авăн çапнă чух та тăкаксем нумай тăваççĕ. Молотилкăпа çапнă тулă уламне тĕрĕслени хыççăн 30—40 процент таран сапман пучăхсем юлни паллă пулнă. Итем çинче пур çĕрте те тырă сапаланса выртнине курма пулать. Çапнă тырра ним витмесĕр, темиçешер кун вырттараççĕ.

Кунта тырăпа пĕрлех уламсем те сапаланса, арканса выртнине курма пулать. Çапнă хыççăн улăма купаламаççĕ.

Колхоз кладовщикĕ Крюков тырра хăй пĕччен турттарса склада хывать. Вăл склада мĕн чухлĕ тырă хывни çинчен урăх никам та пĕлмест, никам та тĕрĕслемест. Çавна пула кунта тырă çухалнă тĕслĕхсем те пулнă.

«Звезда» колхоз председателĕ Мальков тырпула перекетлессишĕн пачах кĕрешмест. Итем çинче йĕркеллĕ хурал çук.

Кун пек тĕслĕхсем ытти хăшпĕр колхозсенче те палăраççĕ. Советскинчи «Ударник» колхозăн итемĕ çинче государствăна пама тесе пĕр тоннăна яхăн сĕлĕ çапса хунă пулнă. Ăна колхоз государствăна леçмерĕ. Çав тырă итем çинче темиçе кун выртнă хыççăн пĕр пентнер таран çеç тăрса юлчĕ. Ытти тыррине вăрласа пĕтернĕ. Çакăншăн никама та ответ тыттарман. Хуралçăсем хăйсене шанса панă ĕçе йĕркеллĕ туман пирки çапнă тырра час-часах вылькăхсем сисе яраççĕ. Кунпа пĕрлех итем çинче тырă тăккаланчăкĕ, улăм нумай сапаланса выртать. 100 çĕмĕле яхăн выльăхсем аркатнă.

Тырра тăккаласа сая янăшăн айăплисене çирĕп ответ тыттармалла.

В. М. Молотов США-ри производство профсоюзĕсен конгресĕн делегацине йышăнни

Октябрĕн 18-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн Заместителĕ тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи производство профсоюзĕсен делегацине йышăннă. Йышăнура çак делегатсем пулнă: Д. Кэри (делегаци руководителĕ), А. Хейвуд, Д. Керрен, А. Финджеральд, Э. Риви, Л. Грин, Р. Робинсон, Л. Дикс, Л. Пресмен, В. Сунин, Л. Абт.

Йышăнура ВЦСПС Председателĕ В. В. Кузнецов, ВЦСПС секретарĕсем Е. Я. Сидоренко, Л. Н. Соловьев тата ВЦСПС президиумĕн членĕ Л. В. Марков пулнă.

ЯЛХУÇАЛĂХ СПЕЦИАЛИСЧĔСЕНЕ КИЛТЕ ВĔРЕНТСЕ ХАТĔРЛЕССИ

СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе Пĕтĕм Союзри Аслă шкул комитечĕ ялхуçалăхĕнчи пысăк квалификациллĕ специалистсене килте вĕрентсе хатĕрлеме йышăннă.

Ялхуçалăхĕн 39 аслă шкулĕнче заочнăй отделенисем уçăлаççĕ. 1945—1946-мĕш вĕренӳ çулĕнче 2 пин студент илмелле. Вĕсем пурте учрежденисемпе предприятисенче ĕçленĕ вăхăтрах вĕренеççĕ. Экзаменсем памалли сессисем вăхăтĕнче çав заочниксем лабораторисемпе, кабинетсемпе, библиотекăсемпе, общежитисемпе тата столовăйсемпе усă кураççĕ. Сессисем хушшинчи вăхăтра вĕсем учебниксемпе тата вĕренӳпе методика пособийĕсемпе усă кураççĕ.

Заочнăй отделенисене чи малтан вăтам шкулсенче вĕренсе тухнă ялхуçалăх специалисчĕсене, халĕ çĕрĕç органĕсенче главнăй е старши агроном, агротехник тата инженер пулса ĕçлекеннисене илмелле. (ТАСС).

ЯЛТИ БИБЛИОТЕКАСЕМ ВАЛЛИ ÇУР МИЛЛИОН КĔНЕКЕ

ЛЕНИНГРАД, октябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Кăçал Ленинград облаçĕнчи районсемпе ялсенчи библиотекăсем çур миллион кĕнеке ытла илнĕ. 350.000 кĕнекене Ленинградри ĕçсыннисем пухса панă. 100.000 кĕнеке ытла облаçри библиотека коллекторĕ ярса панă.

Ленинград облаçĕнчи районсенче, хуласенче, ялсенче халĕ 115 библиотека ĕçлет, парткабинетсем çумĕнче 42 библиотека пур, клубсемпе вулав çурчĕсенче 160 печĕк библиотека уçнă.

...МУНИСТСЕМ ОБЩЕСТВĂЛЛĂ ...ЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ ЕРЧЕТЕС ĔÇРЕ

...ЛЧЕК. Ленин ячĕпе тăракан колхозри ...тин пуçламĕш организацийĕ (секрета... В. Петрянкин) кăçал коммунистсем... е пурĕ 12 пуху туса ирттерчĕ. Çав пухусенче колхозри обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ыйтăва 5 хутчен сÿтсе явнă. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе тататăклăнах лайăхлатас шутпа парторганизаци уйрăм коммунистсене фермăсем тăрăх çирĕплетсе тухнă. Ĕне фермине Е. Мартынов юлташа, сысна фермине М. Теньков юлташа, чăх-чĕп фермине Е. Малов юлташа çирĕплетнĕ. Вĕсем хăйсене шанса панă ĕçсене тимлĕн туса пырса, парти пухăвĕнче час-часах отчет туса параççĕ. Çакна пула колхоз обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пысăк çитĕнÿсем турĕ: сысна тата чăх-чĕп ĕрчетмелли плана ытлашшипех тултарнă, сурăхсен йышĕ те плана пăхнинчен 100 пуç ытла.

Колхоз выльăхсене хĕл каçарма çителĕклĕ апат-çимĕç хатĕрленĕ, ăна ферма заведующийĕсене акт тăрăх панă.

Кăçал фермăра ĕçлекенсем ферма участокĕнчен нумай çĕрулми туса илчĕç. Ăна вĕсем подвала тирпейлесе хучĕç. Халĕ колхозра государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парас ĕç хĕрÿллĕн пырать.

Çакăнпа пĕрлех колхозри обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пысăк çитменлĕхсем те пур-ха. Хăшпĕр витесене ку тарана çитсе те хĕле хатĕрлесе çитермен, вĕсене юсаман, сивĕ кĕрекен шăтăк-çурăксене питĕрмен. Сĕмрĕк чÿречеллĕ витесем те чылай.

Ĕç лашисене уйрăм колхозниксем çумне çирĕплетнĕ пулсан та, вĕсемпе ĕçре тĕрĕс усă курмаççĕ. Лашасемпе тĕрлĕ çынсем ĕçлеççĕ. Çавна пула колхозра кĕрсесем хăм пăрахни те пулкалать. Колхозри ветсанитар Евгений Мартынов та ку тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет. Колхоз правленийĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре палăрнă колхозниксене ĕçшĕн хушса тÿлессине йĕркелемен. Çавăнпа ĕнтĕ колхозăн ĕне-выльăх плана палăртнинчен 9 пуç сахалтарах.

М. ЕГОРОВ.

Кок-сагыза куçарса лартмалли питомнике мĕнле тумалла

Красноармейски районри «Красный Борденер» колхоз 1944 çулта 5 гектар çинчен 101,1 центнер кок-сагыз тымарĕ пухса илчĕ. Районри колхозсем кăçал вăтам шутпа кашни гектартан 15 центнер кок-сагыз тымарĕ пухса илчĕç. «Красный Борденер» колхоз вара кашни гектартан 30—50 центнер кок-сагыз тымарĕ пухса илчĕ. Чăваш республикинче 11 районра кок-сагыз лартаççĕ. Анчах Красноармейски район пĕр пĕччен ытти вунă район чухлĕ кок-сагыз тымарĕ парать.

Красноармейски районра кок-сагыз пĕтĕмпе тенĕ пекех кĕркунне питомнике акса хăвараççĕ, çуркунне вара хире куçарса лартаççĕ.

Кок-сагыз питомникне ĕне тислĕкне лайăх çĕрнĕ ытти тислĕкпе çурмалла хутăштарса хывмалла. Пĕр гектар кок-сагыз валли 80 тăваткал метр куçарса лартмалли питомник кирлĕ. Çав вырăна ĕне тислĕкĕ 2 тонна тата 2 тонна лайăх çĕрнĕ тислĕк кирлĕ. Ĕне тислĕкĕ уламлă пулмалла мар.

Питомнике кок-сагыз лартмалли уйхир çывăхне тусан аван. Питомник тумалли вырăна кĕреçесемпе чавса кĕреплесемпе сÿресе тикĕслетмелле. Ĕне тислĕкĕпе çĕрнĕ тислĕке пăтраштарма пысăках мар шăтăк алтмалла. Шăтăкăн тăршшĕпе сарлакăшĕ 1 метр, тарăнăшĕ 25 сантиметр пулмалла. Çак шăтăка 5 витре ĕне тислĕкĕ, 5 витре çĕрнĕ тислĕк тата 1—1,5 витре шыв ярса лайăх пăтраштармалла. Çакна кĕреçепе ăсса илсе йăрансем çине хумалла.

Йăранăн сарлакăшне 1 метр, çÿллĕшне 5 сантиметр тумалла. Йăран çине тислĕк хунă хыççăн вара кок-сагыз вăррине акса пымалла. 80 тăваткал метр çине 2 килограмм—кашни тăваткал метра 25 грамм кок-сагыз вăрри акас пулать. Вăрăсем пур тĕле те пĕр тикĕс ÿкчĕр тесен, алăпа аксан лайăхрах пулать. Акнă хыççăн вăрра çĕр ăшне лайăхрах кĕртес тесе, хăмаран тунă япалапа пусарса пымалла. Çакăн хыççăн йăран çине 0,25 сантиметр хулăмĕш çĕрнĕ тислĕкпе хăйăр хутăштарса витес пулать.

Кок-сагыз питомникĕ тавра карта тытмалла.

Л. ФУРМАН.

Ялхуçалăх наукисен кандидачĕ, Главрастнаучукăн главнăй агрономĕ.

Хаçатра пичетленсе тухнă материалсем тăрăх

„Тм и Хапаич Селедкин“

Кăçал августăн 26-мĕшĕнче пирĕн хаçатра «Тмин Хапаич Селедкин» ятлă фельетон пичетленсе тухрĕ. Вăл фельетонра Военторгпа Наркомместпромăн мастерскойĕсенчи çитменлĕхсем çинчен çырăннăччĕ. Фельетонра çырнă фактсем пурте тĕрĕс пулнă.

Военторг начальникĕ Енисеев юлташ фельетонра палăртнă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе кирлĕ мерăсем йышăннă. Атă-пушмак çĕлекен мастерской заведующине Егоровăна ĕçрен кăларнă.

Хула Совет исполкомĕ «Индпошив» мастерскойĕн ĕçĕсем çинчен хăйĕн ларăвĕнче сÿтсе явнă.

НИМĔÇСЕН ВĂРÇĂ ПРЕСТУПНИКĔСЕНЕ СУД ТĂВАС УМĔН

Октябрĕн 18-мĕшĕнче Берлинра нимĕçсен вăрçă преступникĕсене 24 çынна айăплас тĕлĕшпе Пĕтĕм тĕнчери Çар Трибуналĕн 1-мĕш ларăвĕ пулса иртнĕ.

Кунта эпир айăпласа çырнине, Пĕтĕм тĕнчери Çар Трибуналĕ çирĕплетнĕскере, кĕскен каласа паратпăр.

Советла Социализмлă Республикăсен Союзĕ, Великобританипе Çурçĕр Ирландин Пĕрлешнĕ Королевстви, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем, Франци республики ячĕпе аяларах алă пуснă Р. А. Руденко, Хартли Шоукросс, Роберт Г. Джексон тата Франсуа де-Ментон, хăйсен правительствисенчен 1945 çулхи августăн 6-мĕшĕнче Лондонра тунă килĕшÿ тăрăх тата çак Трибуналăн Уставĕ тăрăх вăрçă преступникĕсен ĕçне тĕпчеме тата вĕсене судпа айăплама полномочи пачĕскерсем, мире хирĕç преступленисем тунăшăн, вăрçă ĕçĕнче преступленисем тунăшăн, этемлĕхе хирĕç преступленисем тунăшăн тата çав преступленисене тума пĕтĕмĕшле план е заговор тунăшăн çак çынсене айăплă тесе пĕлтереççĕ: Герман Вильгельм Геринг, Рудольф Гесс, Иоахим фон Риббентроп, Роберт Лей, Вильгельм Кейтель, Эрнст Кальтенбруннер, Альфред Розенберг, Ганс Франк, Вильгельм Фрик, Юлиус Штрейхер, Вальтер Функ, Хальмар Шахт, Густав Крупп фон Болен унд Гальбах, Карл Дениц, Эрих Редер, Бальдур фон Ширах, Фриц Заукель, Альфред Иодль, Мартин Борман, Франц фон Папен, Артур Зейсс Инкварт, Альберт Шпеер, Константин фон Нейрат тата Ганс Фриче. Вĕсене уйрăммăн та тата ушкăнсемпе организацисен членĕсем пулнăшăн айăплаççĕ. Çавăн пек преступленисем тунă ушкăнсемпе организацисен шутне çаксем кĕреççĕ: правительство кабинечĕ, нацистла-социалистсен партийĕн ертсе пыракан составĕ, Германири национал-социалистсен партийĕн охранăй отрячĕсем (СС), ку шута хăрушсăрлăх служби отрячĕсем те (СД) кĕреççĕ, государствăн вăрттăн полицийĕ (гестапо), Германири национал-социалистсен партийĕн штурмовой отрячĕсем (СА), генеральнăй штаб тата Германири хĕçпăшаллă вăйсен аслă командованийĕ.

Айăпласа çырнин 1-мĕш сыпăкĕнче çакăн çинчен каланă: айăпланакансем пурте, ытти çынсемпе пĕрле, 1945 çулхи майăн 8-мĕшĕччен темиçе çул хушши мире хирĕç преступленисем, вăрçă преступленийĕсем тата этемлĕхе хирĕç преступленисем тăвас ĕçе ертсе пыраканскем, организацилекенсем, хавхалантаракансем тата çав преступленисене тăвакансем пулса тăнă. Çак Трибуналăн Уставĕ тăрăх тата Уставри положенисем тăрăх, вĕсем хăйсен ĕçĕсемшĕн те, çавăн пекех тата çавнашкал плансемпе заговорсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе тунă кирек епле урăх çыннăн ĕçĕшĕн те кашни уйрăммăн ответ тытаççĕ. Пĕтĕмĕшле плана е заговора мире хирĕç преступлени тунă кĕрет. Айăпланакансем агрессиллĕ вăрçăсен планне тунă, çав вăрçăсене пуçланă. Çавăн пек вăрçăсене вĕсем пĕтĕм тĕнчери договорсене, килĕшÿсемпе обязательствăсене пăсса пуçласа янă. Вăрçă вăхăтĕнче вăрçă вăрçмалли правилăсемпе йăласене пăхăнса пыман: çынсене вĕлернĕ, çынсене тискеррĕн тытса усранă, хăйсем оккупациленĕ çĕршывсенчи халăха чуралăха илсе кайнă. Тыткăна лекнисене вĕлернĕ, тискер условисенче тытса усранă, заложниксене вĕлернĕ, обществăллă харпăрлăхпа уйрăм çынсен харпăрлăхне çаратнă, хуласемпе ялсене аркатса хăварнă, çурт-йĕрсене ишĕлтернĕ. Пĕтĕмĕшле планра е заговорта вĕсем Германири, çавăн пекех тата Германи оккупациленĕ çĕршывсенчи халăха вĕлерсе пĕтерме, чура туса хума палăртнă. Çакăн пек ĕçсене вĕсем вăрçăччен те, вăрçă вăхăтĕнче те политика, раса тата тĕн тĕлĕшпе çыхăнтарса туса пынă. Çак преступленисем ĕнтĕ агрессиллĕ вăрçăн пĕтĕмĕшле планне кĕнĕ.

Айăпласа çырнинче малалла гитлеровецсем ирĕклĕхе юратакан халăхсене хирĕç заговорсем организациленин пĕтĕмĕшле тĕллевĕпе меточĕсене, нацистсем Германири власа тытса илнине, государство тытăмĕпе обществăллă пурнăçри демократин пур формисене те пĕтерсе тăкнине, нацистсен режимне хирĕçлекенисене пурне те тискеррĕн путарнине, гитлеровецсем Австрие, Чехословакие, Польшăна тытса илме хатĕрленнине тата çав çĕршывсене мĕнле тытса илнипе каласа панă.

Çапла ĕнтĕ, нацистла заговорщиксем Австрипе Чехословакие тапăнса агрессиллĕ вăрçă пуçласа янă. Унтан вара 1928 çулхи Бриан—Келлог пакчĕн условийĕсене пăсса, Польшăна тапăннă. Польшăна парăнтарнă хыççăн, нимĕçсен хĕçпăшаллă вăйĕсене 1940 çулхи апрелĕн 9-мĕшĕнче Данипе Норвегие, 1940 çулхи майăн 10-мĕшĕнче Бельгие, Нидерландсене, Люксембурга, 1941 çулхи апрелĕн 6-мĕшĕнче Югославипе Грецие кĕрсе кайма приказ панă. Çак çĕршывсене вăрçăпа тапăнассине малтанах питĕ тĕплĕн палăртса хунă пулнă.

1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче гитлерла заговорщиксем, Германипе Совет Союзĕ пĕр-пĕрне тапăнмалла марри çинчен тунă пакта пăсса, вăрçă пуçласа ярасси çинчен пĕлтермесĕрех, Совет Союзне килсе тапăнса. Совет Союзне хирĕç агрессиллĕ вăрçă пуçласа ячĕ.

Совет Союзне тапăнсан малтанхи кунсенчен пуçласах гитлерла заговорщиксем, малтанах тĕплĕн туса хатĕрленĕ плана тăрăх, хуласемпе ялсене аркатса, фабрикăсемпе заводсене, колхозсемпе совхозсене, электростанцисемпе чугун çулĕсене пĕтерсе тăкма, ССР Союзĕнчи халăхсен национальнăй культура учрежденийĕсене çаратма тата аркатса тăкма, музейсене, шкулсене, больницăсене, чиркÿсене, историллĕ памятниксене аркатма, совет гражданĕсене Германие чуралăха хăваласа кайма, çавăн пекех тата çитĕнсе çитнĕ çынсене, хĕрарăмсене, старикксемпе ача-пăчасене, уйрăмах вырăссене, белоруссене, украинецсене тата пур çĕрте те еврейсене вĕлерсе пĕтерме тытăннă.

Çав преступленисене Германи çарĕсем нацистла (гитлерла) правительствăн, генеральнăй штабăн тата Германири хĕçпăшаллă вăйсен аслă командованийĕн приказĕсем тăрăх тунă.

Нацистла заговорщиксем агрессиллĕ вăрçă пуçласа ярса, Германи, Итали тата Япони хушшинче вунă çуллăха вăрçăпа экономика килĕшĕвне тума хатĕрленĕ. Агрессиллĕ вăрçăн малтанхи тапхăрĕнчи йăнăçăвĕсене кура, 1941 çулти декабрĕн 7-мĕшĕнче Япони Пирл-Харборпа Филиппин утравĕсене тапăнса Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсене, Британипа нацисен пĕрлешĕвне хирĕç вăрçă пуçласа ячĕ, французсен Индокитайне тата Нидерландсен Лăпкă океанри кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи çĕрĕсене тапăнчĕ. 1941 çулхи декабрĕн 11-мĕшĕнче Германи Пĕрлешÿллĕ Штатсене хирĕç вăрçă пуçласа ячĕ.

Айăпласа çырнин вăрçă преступленийĕсем çинчен калакан сыпăкĕнче айăпланакансем 1939 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1945 çулхи майăн 8-мĕшне çитиччен Германире тата Германин хĕçпăшаллă вăйĕсем оккупациленĕ çĕршывсемпе облаçсенче айăпланакансем тунă преступленисене кăтартса панă.

Çав вăрçă преступленийĕсене айăпланакансем хăйсем е урăх çынсем тунă. Çар Трибуналĕн Уставĕн 6-мĕш статьи тăрăх, урăх çынсем тунă преступленисемшĕн те çак çынсемех ответ тытаççĕ. Мĕншĕн тесен çав преступлени тăвакан урăх çынсем пĕтĕмĕшле плана заговора пурнăçа кĕртсе пынă. Айăпланакансем вара çав плана заговора туса хатĕрленĕ, вĕсене пурнăçа кĕртес ĕçре ертсе, организацилесе, хавхалантарса пынă, е çав преступленисене тăвас ĕçе хăйсем те хутшăннă.

Çакăн пек методсемпе преступленисем пĕтĕм тĕнчери килĕшÿсене, шалти уголовнăй законсене, уголовнăй правăн тĕп принципĕсене пăсни пулса тăрать.

Гитлеровецсен хĕçпăшаллă вăйĕсем оккупациленĕ çĕршывсемпе облаçсенче айăпланакансем вырăнти халăха тăтăшах асаплантарнă, вĕлернĕ, сунасăр-мĕнсĕрех тĕрмене хупса лартнă.

Çынсене персе пăрахса, çакса, газсемпе пăчăхтарса, выçăхтарса, питĕ йывăр ĕçлеттерсе вĕлернĕ. Çавăн пекех тата выçăхтарса, йывăр ĕçлеттерсе, хĕнесе, хĕртнĕ тимĕрпе пĕçертсе, чĕрнисене тăпăлтарса кăларса, тĕрлĕрен опытсемпе операцисем туса, медицина тĕлĕшĕнчен пулăшу памасăр асаплантарнă. Оккупациленĕ хăшпĕр çĕршывсемпе облаçсенче тĕн йăлин уявĕсене ирттерме чарнă, тĕн çыннисемпе манахсене хĕсĕрленĕ, чиркÿ харпăрлăхĕсене туртса илнĕ. Вĕсем халăхсене, уйрăм расăсемпе наци çыннисене вĕлерсе пĕтернĕ. Çавăнпа вĕсем хăйсем оккупациленĕ çĕршывсемпе облаçсене уйрăм расăсемпе халăхăн уйрăм сийĕнчен тасатма, уйрăм нацисемпе уйрăм раса çыннисене, пĕр-пĕр тĕне ĕненекен çынсен ушкăнĕсене пĕтерсе тăкма шутланă. Вырăнти халăхран тĕрлĕ сведенисем илес тесе, вĕсем граждански халăха тăтăшах темĕн тĕрлĕ те асаплантарнă.

Айăпласа çырнинче малалла Францири, Данири, Бельгири, Голландири, Люксембургри, Италири, Польшăри, Чехословакири тата Югославири халăхсене тискеррĕн тыткалани, асаплантарни тата вĕлерсе пĕтерни çинчен каласа панă.

Айăпласа çырнинче Совет Союзĕнчи халăха массăллăн вĕлерсе пĕтерни çинчен тĕплĕн каланă.

Львов облаçĕпе Львов хулинче нимĕçсем совет гражданĕсене 700.000 çынна яхăн вĕлернĕ.

Литва ССР-ĕнче совет гражданĕсене Панорăра сахалтан та 100.000 çынна, Каунасра 70.000 çынна, Алитусра 60.000 çынна яхăн вĕлернĕ.

Латви ССР-ĕнче совет гражданĕсене 577.000 çынна. Смоленск облаçĕнче 135.000 çынна вĕлернĕ.

Ленинград облаçĕнче 172.000 çынна вĕлернĕ, ку шута Ленинград хулине тупăсенчен пеннипе тата самолетсенне вĕçсе пырса бомбăсем пăрахнипе пула вилнĕ 20.000 çын та кĕрет.

Хĕвеланăçĕнчи тата хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсене Германи çарĕсем оккупацилесе тăнă вăхăтра Германи правительствипе Германин верховнăй командованийĕ çак çĕршывсенчи сывлăхлă çынсене Германие илсе каяс политикăна тытса пынă. Çакăн пек хăваласа кайнă çынсем вара Германире е вăл оккупациленĕ ытти çĕршывсенче çар заводĕсенче е Германие вăрçă вăрçма кирлĕ ытти ĕçсенче чурасем вырăнĕнче пурăннă.

Совет Союзĕнчен Германин оккупаци власĕсем совет гражданĕсене 4 миллион çынна яхăн чуралăха илсе кайнă. Чехословакирен Чехословаки гражданĕсене 750.000 çынна Германие вăрçă вăрçма кирлĕ ĕçсенче ирĕксĕрлесе ĕçлеттерме илсе кайнă.

Тыткăна лекнĕ çар çыннисене тискер тытса усрани тата вĕлерни çинчен калакан параграфра çакна палăртнă: Германие хирĕç вăрçакан çĕршывсен Германи çарĕсен аллине тыткăна лекнĕ çар çыннисене айăпланакансем тискер тытса усранă, вĕсене пуранмалăх апат-çимĕç, çурт-йĕр, кĕпе-тумтир паман, медицина тĕлĕшĕнчен пулăшман, çав тери йывăр условисенче ĕçлеттернĕ, асаплантарнă, этем чăтма çук мăшкăлланă, кайран вара вĕлернĕ. Германи правительствипе Германин верховнăй командованийĕ тыткăна лекнĕ çар çыннисене тĕрлĕрен концентрациллĕ лагерьсене хупса лартнă, кунта вара вĕсене вĕлернĕ тата тĕрлĕрен майпа асаплантарнă. Çар çыннисене час-часах тыткăна илнĕ чухнех вĕлернĕ.

Айăпласа çырнинче малалла Америкăн, Франции, Англин тата Совет Союзĕн тыткăна лекнĕ çар çыннийĕсене вĕлерни çинчен тата вĕсене тискеррĕн тытса асаплантарни çинчен каласа панă.

1941 çулхи сентябрь уйăхĕнче Смоленск çывăхĕнчи Катынь вăрманĕнче гитлеровецсем поляксен тыткăна лекнĕ офицерĕсене нумай вĕлернĕ.

Айăпласа çырнинче Францире, Голландире, Бельгире, Югославире тата Совет Союзĕнче заложниксене вĕлерни çинчен каласа панă.

Айăпланакансем нацистсен çар машинине вăйлатас тесе, халăх хисепне чакарас тесе, Европăна кĕлмĕçлентерсе хăварас тесе, хăйсене тата хăйсемпе пĕр шутлисене пуянлатас тесе тата Германие экономика тĕлĕшĕнчен Европăра пуçпулса тăма пулăшас тесе, Германи çарĕсем оккупациленĕ çĕршывсемпе облаçсенчи халăхпа пуянлăха нимĕн хĕрхенÿсĕр эксплоатациленĕ.

Айăпласа çырнинче нимĕçсем Францирен, Норвегирен, Бельгирен, Голландирен, Люксембургран мĕн чухлĕ оборудовани, чĕртавар, ялхуçалăхпе промышленность продукцийĕсене илсе кайнине, çавăн пекех тата искусство произведенийĕсене çаратнине, пĕтерсе тăкнине тĕплĕн каласа панă.

Совет Союзĕнче нацистла заговорщиксем 1.710 хулана, 70.000 ытла яла пĕтерсе тăкнă е питĕ пысăк сиен кÿнĕ. 6.000.000 ытла çурта аркатса хăварса 25 миллион çынна яхăн çуртсăр тăратса хăварнă. Ытларах аркатнă хуласен шутне Сталинград, Севастополь, Киев, Минск, Одесса, Смоленск, Новгород, Псков, Орел, Харьков, Воронеж, Дон çинчи Ростов, Сталино тата Ленинград хулисем кĕреççĕ.

Германи командованийĕн официальнăй меморандумĕ тăрăх, нацистла заговорщиксем совет хулисене тĕппипех аркатса тăкма палăртни куранса тăрать.

Айăпласа çырнинче малалла индустри çурчĕсемпе ытти учрежденисене аркатса тăкни çинчен, промышленноçпа ялхуçалăхне çаратни çинчен, Латвирен, Эстонирен, Литваран, çавăн пекех тата Чехословакирен искусство произведенийĕсене илсе тухса кайни çинчен тĕплĕн каласа панă.

Германи оккупациленĕ хăшпĕр çĕршывсемпе облаçсенче айăпланакансем çав территорисене политика, культура, экономика тĕлĕшĕнчен Германипе пĕрлештерес политикăна пурнăçа кĕртсе пынă.

Айăпланакансем çав территорисенчи нациллĕ уйрăмлăхсене пĕтерсе тăкма тăрăшнă. Çав плана пурнăçа кĕртес тесе, айăпланакансем вырăнти халăха вăйпах урăх çĕре куçарса кайнă та унта нимĕç колонисчĕсене пырса вырнаçтарнă.

Этемлĕхе хирĕç тунă преступленисем çинчен калакан сыпăкра çакна кăтартса панă: айăпланакансем 1939 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1945 çулхи майăн 8-мĕшне çитиччен Германире тата Германин хĕçпăшаллă вăйĕсем оккупациленĕ çĕршывсенче, тинĕсре тунă преступленисем çинчен каласа панă.

Айăпланакансем нацистла правительствăна хирĕç вĕсен пĕтĕмĕшле планĕпе заговорĕсене хирĕçле шухăшлакан пур граждансене те тата гитлеровецсене хирĕçле ĕçсем тума пултараççĕ тесе шутлакан пур граждансене те хĕсĕрленĕ, тĕрмене хупса лартнă тата вĕлернĕ.

Заговорщиксен шухăшне пурнăçа кĕртес тесе специальнăй судсем организациленĕ. Германи правительствин «кăмăлне кайман» шухăшсемпе ĕмĕтсене пурне те пĕтерес тесе, тискерле ĕçсем тума ирĕк панă. Тĕрлĕрен концентрациллĕ лагерьсен шутне 1933 çулта организациленĕ Бухенвальдри лагерь, 1934 çулта организациленĕ Дахаури лагерь кĕреççĕ.

Çав лагерьсенче тата ытти лагерьсенче те гражданла халăха чурасем пек ĕçлеттернĕ, вĕсене тискеррĕн тытса усранă, тĕрлĕрен майсемпе вĕлернĕ. 1939 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1945 çулхи майăн 8-мĕшне çитиччен çак политикăна Германин хĕçпăшаллă вăйĕсем оккупациленĕ çĕршывсенче те пурнăçа кĕртсе пынă.

Çÿлте каланисене шута илсе çак айăпласа çырнине Трибунала параççĕ. Ăна акăлчанла, французла тата вырăсла çырнă, кашни текстах законлă пулса тăрать. Çакăнта çÿлерех асăннă айăпланакансен ĕçне Трибуналра пăхса тухмалла.

Айăпласа çырнине çаксем алă пуснă:

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн ячĕпе — **Р. А. Руденко.**

Великобританипе Çурçĕр Ирландин Пĕрлешнĕ Королевствин ячĕпе—**Хартли Шоукросс.**

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен ячĕпе — **Роберт Джексон.**

Франци республики ячĕпе — **Франсуа де-Ментон.**

Сирипе Ливан республикисен президенчĕсен канашлăвĕ

БЕЙРУТ, октябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 13-мĕшĕнче Ливанри Зебдани хулинче Сири республикипе Ливан республикин президенчĕсен канашлăвĕ пулса иртнĕ. Сири республикин президенчĕпе пĕрле канашлăва Сири министрĕсен совечĕн председателĕ тата ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ пынă. Ливан республикин президенчĕпе пĕрле Ливан министрĕсен совечĕн председателĕ, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ тата промышленноçпа снабжени министрĕ пынă.

Президентсем пуринчен ытла ют çĕршывсен çарĕсене Ливанпа Сири республикисенчен илсе тухасси çинчен тата халăхри вăхăтра французсен аллинче тăракан полномочисене Сирипе Ливана парасси çинчен сÿтсе-явнă.

ЕГИПЕТ ПРЕМЬЕР-МИНИСТРĔ КАЛАНИ

ЛОНДОН, октябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Каиртан пĕлтернĕ тăрăх, Египет премьер-министрĕ Нокраши-паша ĕнер Египетри депутатсен палатинче Египет ĕмĕтне—Англи çарĕсене Египетран илсе каяссине тата Судана Египетпа пĕрлештерессине—пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе мĕн туни çинчен калаçма килĕшмен.

Египета Англин «тимĕр дивизийĕ» пыни çинчен ыйтсан, Нокраши-паша çапла каланă: «Пĕр дивизие тепĕр дивизипе улăштарни правительствăна кирлĕ мар. Правительствăна пĕр ыйту çеç интереслентерет, вăл—ют çĕршывсен мĕнпур çарĕсене Египетран илсе тухасси», тенĕ.

НИГЕРИРЕ РАБОЧИСЕМ ЗАБАСТОВКА ТУМА ПУÇЛАССИ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, октябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Англин колони министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин Африкăри колонийĕ пулса тăракан Нигерире темиçе пин рабочи, çав шутра транспорт рабочийĕсем те, Англи правительстви хăйсен ĕç условийĕсене пăхса тухма комисси тăвас ĕçе тепĕр срока хăварнине хирĕç пулса, Нигери столицине Лагос хулине выçă поход йĕркипе пухăнатпăр тата кашни арнерех пĕр сехетлĕхе ĕçлеме чарăнатпăр, тесе хăратаççĕ.

США-ри ЗАБАСТОВКĂСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Нью-Йорк портĕнчи 60.000 грузчик виççĕмĕш эрне ĕнтĕ ĕçе тухмаççĕ. Грузчиксен Америкăри ĕç федерацине кĕрекен профсоюзĕн пуçлăхĕ Райан судно хуçисемпе пĕр шухăшлă пулса ĕçлет. Çакăн пирки профсоюз членĕсем питĕ тарăхаççĕ.

Октябрĕн 14-мĕшĕнче пулса иртнĕ митингра грузчиксем Нью-Йорк мэрĕ Ла Гардиа сĕннине йышăннă. Ла Гардиа çапла тума сĕннĕ: ахаль рабочисенчен комитет суйламалла та ăна çĕнĕ коллективлă договор тăвасси çинчен судно хуçисемпе калаçма хушмалла, судно хуçисем калаçма килĕшсенех вара ĕçе тытăнмалла, тенĕ. Райан тата судно хуçисем рабочисем ыйтнине сирсе янă. Вĕсем забастовка тăвакан рабочисене пĕр условисĕрех ĕçе тытăнма тата судно хуçисемпе калаçас ĕçе Райана сĕнме хушнă. Забастовка тăвакан грузчиксене Америкăри ĕç федерацине кĕрекен профсоюзсем те, Производствăллă профсоюзсен конгресне кĕрекен профсоюзсем те пулăшаççĕ. Çапла, моряксен Производствăллă профсоюзсен конгресне кĕрекен профсоюзĕ Райана уççăнах сивленĕ. Çав профсоюзри рабочисем причалсем патне суднăсем илсе пыма тата лебедкăсене ĕçлеттерме пăс пама килĕшмен. Забастовка тăвакан грузчиксене радистсен, суднăсем çинчи поварсен тата флот пожарникĕсен профсоюзĕсем те пулăшса тăраççĕ. Филадельфи портĕнчи грузчиксем (вĕсен профсоюзĕ Америкăри ĕç федерацине кĕрет) Нью-Йоркран пыракан суднăсене пушатма килĕшмен. Пĕрлешÿллĕ Штатсен Хĕвеланăç хĕрринчи штатсенчи грузчиксен профсоюзĕн председателĕ (çав профсоюз Производствăллă профсоюзсен конгресне кĕрет) Бриджес çапла каланă: эпир хĕвелтухăç енчи çыранри забастовка тăвакан грузчиксене пур майпа та пулăшăпăр. Вĕсемпе пĕр шухăшлă пулнине кăтартас тесе, Лăпкă океан хĕрринчи грузчиксемпе моряксен забастовкине пуçласа ярăпăр.

Райан забастовкăна пĕтерсе лартма тата профсоюза ертсе пырас ĕçе хăйĕн аллинче тытса хăварма пĕтĕм вăйпа тăрăшать. Октябрĕн 15-мĕшĕнче вăл грузчиксем ĕçе тухма килĕшрĕç, тесе пĕлтернĕ. Анчах та ĕçе 6 000 рабочи яхăн çеç тухнă, вĕсене те забастовка тăвакан рабочисен хуралĕсем ĕçлеме чарса киле янă.

Ассошиэйтед Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 13-мĕшĕнче Массачузетс штатĕнчи 60 хулара автобуссемпе трамвайсен 1.800 водителĕ забастовка пуçласа янă (вĕсем Америкăри ĕç федерацийĕн профсоюзне кĕреççĕ). Забастовка тăвакансем ĕç укçине хăпартма ыйтаççĕ. Лăпкă океан хĕрринчи штатсенче вăрман промышленноçĕнчи 60.000 рабочи виççĕмĕш эрне ĕнтĕ ĕçе тухмаççĕ. Надзирательсем забастовка тунă пирки (вĕсем техника çыннисен ĕç укçине хăпартасси тата вĕсен ĕç условийĕсене лайăхлатасси çинчен предпринимательсемпе калаçма ыйтаççĕ) 200.000 горняка яхăн ĕçлемеççĕ. Голливуд киностудийĕнчи 8.000 рабочи халĕ те забастовка тăваççĕ-ха (çав рабочисен профсоюзĕ Америкăри ĕç федерацине кĕрет).

США-ра ПРОГРЕСЛĂ РАДИООБОЗРЕВАТЕЛЬСЕНЕ ХĔСĔРЛЕÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк пост» хаçат ĕнер çапла пĕлтернĕ: представительсен палати Америкăна хирĕç ĕçлекенсен ĕçĕсене йĕрлесе тĕпчеме тунă комисси хальхи вăхăтра 8 радиообозревателĕн — Кингдонăн, Уолшăн, Стилăн, Вандеркукăн, Гейлморăн, Серджион, Уолтонăн тата Джекобсăн радиопа тухса каланă сăмахĕсене тĕпчет. Çав радиообозревательсенчен пĕри хăйĕн ĕçне тĕпчени чухне çапла каланă: асăннă обозревательсем пурте «Америкăна йăлтах уйрăм пурăнтарма тăрăшакансене хирĕç пыракан прогреслă шухăшĕсемпе» палла пулса тăчĕç, тенĕ.

Конгресс членĕ Селлер демократ (Нью-Йорк штатĕнчен суйланнăскер) çапла каланă: çав комисси «сунарçă пек ĕçлет», «промышленниксен ассоциацийĕ» текен вăйлă организаци çав çынсен ĕçĕсене йĕрлесе тĕпчеме хистенĕ, тенĕ. Комисси реакциллĕ шухăшсем саракан комментаторсен—Калтенборнăн, Элтон Клеусăн тата Фултон Льюисăн ĕçĕсене тĕпчемест, тенĕ Селлер. Малалла Селлер çапла каланă: «Промышленниксен ассоциацийĕ» ирттерекен кампани, тĕрлĕ организацисем протестлемесен, ăнăçма пултарать, çав ассоциаци представительсен палати тунă комиссипе пукане вырăнне усă курать.

Çав комисси ирттерекен кампанин ĕçĕ ăнăçрĕ те пулмалла. «Дейли Уоркер» хаçат октябрĕн 16-мĕшĕнче пĕлтернĕ тăрăх, «Дэбл'ю Игрек Зед» ятлă пысăк радиостанци Гейлмор обозревателе пулăшса тăнă частнăй компанипе тунă договора сасартăк пăрахăçа кăларнă. Хаçат каланă тăрăх, радиостанци пуçлăхĕсем вăл договора представительсен палатин комиссийĕ Гейлморăн радиопа каланă мĕнпур сăмахĕсен копийĕсене пама хушнине пĕлсен пăрахăçа кăларнă. Хаçат тата çапла çырать: «Дэбл'ю о Ве» ятлă радиостанци те çавăн çинчен пĕлсенех Джекобс обозревателе сасартăк вырăнтан кăларнă.

ЛОНДОНА ПОЛЬШĂН ÇАР МИССИЙĔ ÇИТНĔ

ЛОНДОН, октябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 15-мĕшĕнче каçхине Лондона Польшăн çар миссийĕ çитнĕ. Ăна Модельский генерал пуçпулса ертсе пырать. Ку мисси Англи власĕсемпе Польша çарне Великобританирен Польшăна куçарас тĕлĕшпе калаçса татăлмалла, çавăн пекех тата хальхи вăхăтра специальнăй лагерьсенче тытса усракан, анчах та Польшăна таврăнма хатĕрри çинчен пĕлтернĕ салтаксене пăхса тăрасси çинчен калаçса татăлмалла.

УЧРЕДИТЕЛЬНĂЙ ПУХУ ПУХМА ЫЙТСА ТУНĂ ДЕМОНСТРАЦИСЕМ

РИМ, октябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Италири хаçатсем октябрĕн 14-мĕшĕнче пулса иртнĕ халăх демонстрацийĕсемпе митингĕсем çинчен çыраççĕ. Çав демонстрацисемпе митингсене социалистсемпе коммунистсен партийĕсем пуçарнипе ирттернĕ, вĕсене учредительнăй пухăва часрах пухтарасшăн пулса тунă.

«Унита» хаçат çапла пĕлтерет: пĕтĕм Италийĕпе ирттернĕ демонстрацисенче 3 миллион çын пулнă, Римри демонстрацире — 120.000 çынна яхăн пулнă.

Вырсарникун ирттернĕ митингсем республикăшăн тăракан массăсен çав тери пысăк манифестацийĕ пулса тăчĕç,—тесе çырать «Аванти» хаçат,—вĕсем государствăна мĕнле йĕркепе тытса тăрас ыйту çинчен халăхран ыйтса пĕлни пулса тăчĕç. Халăха правасăр хăварас тесе шыва пăтратма хăтланакансене ĕççыннисем хăйсем демократи тĕлĕшпе çитĕнсе çитнине питĕ лайăх кăтартса пачĕç. Италири пĕр хулара та тытăçу тавраш пулман «Обществăри йĕрке сирĕп мар» пирки суйлав ирттерме çук тесе калани тĕрĕс марринне лайăх кăтартса панă. Октябрĕн 14-мĕшĕнче демонстрацисемпе митингсем туса, Итали халăхĕ учредительнăй пуху пухмалли хăйĕн правине татăклăнах çĕнтерсе илчĕ».

«Италиа Либера» хаçат çапла çырать: вырсарникун пулса иртнĕ демонстрацисем халăха политика тулашĕнче тăратма тăрăшакансене панă чи лайăх ответ пулса тăчĕç. «Пирĕн вăрăм çул утса тухмалла пулать-ха, анчах та Италире демократи пур ĕнтĕ,—тесе çырать хаçат. — Çакна ют çĕршыв çыннисен те ăнланса илмелле. Халăхпа кĕрешÿ партийĕ пухма тăрăшакан учредительнăй пухăвăн Италире демократиллĕ çĕнĕ республика туса хумалла».

Министрсен совечĕн председателĕ Парри хаçатсен представителĕсене çапла каланă: учредительнăй пухăва пухтарасшăн пулса иртнĕ демонстрацисем йĕркеллĕ иртнĕ, çакă вăл «Итали халăхĕ çитĕнсе çитнине кăтартса парать».

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-99, промышленность пайĕн—3-97, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00429 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. б. 59 42. 1 п. л. Тираж 16.000 экз.